# КОРАН

чăвашла кĕскен ăнлантарса куçарни,
30-мĕш пайĕ

УДК 28-24
ББК 86.38-2
К 66

**Коран.** *Чӑвашла кӗскен ӑнлантарса куҫарни, 30-мӗш пайӗ.* – Шупашкар: Ҫӗнӗ Вӑхӑт», 2020. – 36 с.

© Сайфутдинов Р.М., 2020

## 1. «Аль-Фатиха». Кӗнекене пуҫлакан сыпӑк

Хӑйӗн ырӑлӑхне мӗн пур чуна паракан, таса чун-чӗреллӗ ҫынна ӗмӗрхи асапран ҫӑлакан Турӑ ячӗпе!

1. Мӗн пуррине пултарнӑ тӗнчесен пӗртен-пӗр Туррине чыс та мухтав! 2. Вӑл Хӑйӗн ырӑлӑхне мӗн пур чуна парать, Вӑл таса чун-чӗреллӗ ҫынна ӗмӗрхи асапран ҫӑлать. 3. Пӗр Вӑл кӑна явап кунӗн патши пулса тӑрать.

4. Турӑҫӑм! Эпир пӗр Сана ҫеҫ ӗненсе пуҫҫапатпӑр, Эсӗ хушнӑ пек пурӑнатпӑр! Турӑҫӑм! Пире усалран сыхласам, пире ҫылӑха кӗресрен упрасам, пире йывӑрлӑхра пулӑшса пырсам! 5. Турӑҫӑм! Пире тӳрӗ ҫул ҫине тӑратсам, пире чӑн тӗне ҫирӗп тытса пурӑнмалла тусам!

6. Турӑҫӑм! Пире Сана чун-чӗререн ӗненсе Санӑн сӑвапна тивӗҫнӗ ҫынсен ҫулӗпе утма пиллесем! 7. Турӑҫӑм! Пире тӗрӗслӗхе ӑнланманнипе улталанса пурӑннӑ халӑх уттипе утасран упрасам! Пире чӑнлӑха курайманнипе ыттисене те суя ҫул ҫине пӑрса яма тӑрӑшакан халӑх уттипе каясран упрасам!

## 78. «Хыпар» ятлӑ сыпӑк

Хӑйӗн ырӑлӑхне мӗн пур чуна паракан, таса чун-чӗреллӗ ҫынна ӗмӗрхи асапран ҫӑлакан Турӑ ячӗпе!

1. Суя тӗнпе пурӑнакансем пӗр-пӗринпе мӗн пирки тавлашаҫҫӗ, пӗр-пӗринчен мӗн ҫинчен ыйтса пӗлеҫҫӗ? 2. Аслӑ хыпар ҫинчен. Чӗрӗлӳ кунӗ ҫинчен. Ӗмӗрхи пурнӑҫ ҫинчен. 3. Ун пирки вӗсен тӗрлӗ шухӑш. Пӗрисем чӗрӗлӳ кунӗ ҫитессине тата ӗмӗрхи пурнӑҫ пуррине пачах ӗненмеҫҫӗ, теприсем иккӗленеҫҫӗ. 4. Ҫук! Чӗрӗлӳ кунӗ чӑнлӑх пулнине тата ӗмӗрхи пурнӑҫ пуррине вӗсем вилтӑпри айӗнчен чӗрӗлсе тухсан хӑйсемех пӗлӗҫ. 5. Тӗрӗс! Чӗрӗлӳ кунӗ чӑнлӑх пулнине тата ӗмӗрхи пурнӑҫ

пуррине вĕсем суя тĕнпе пурăннăшăн асап çитсен хăйсен куçĕсемпе курĕç. 6. Мĕншĕн вĕсем Пирĕн хăвата курмаççĕ? Эпир çынсене пурăнма, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çӳреме çĕр сарса паман-и? 7. Эпир сăрт-ту хăпартса çĕре çирĕплетмен-и?

8. Адам ывăлĕ-хĕрĕ! Эпир сире мăшăрлă тунă – сирĕн хушăрта арçынсем те, хĕрарăмсем те пур. 9. Кулленхи ĕçсенчен канса вăй пухма Эпир сире çывăрттаратпăр, канма май паратпăр, тĕрлĕ тĕлĕксем кăтартатпăр. 10. Пирĕн хăватпа каç тĕттĕмĕ тĕнчене хупăрлать, сире канма май парать. 11. Пирĕн хăватпа кун çутинче ĕç вĕресе тăрать – эсир ĕçлетĕр, хăвăр тăвас тенине тăватăр. 12. Эпир сирĕн çийĕн çичĕ тӳпе хăпартса çирĕплетрĕмĕр, 13. Хĕвеле сире çутатса та ăшăтса тăмалла турăмăр. 14. Эпир тӳперен çумăр çутаратпăр та, 15. Çĕре çумăр шывĕпе шăварса тырă-пулă, йывăç-курăк çитĕнтеретпĕр, 16. Ешĕл пахчасенче ӳсекен йывăççене шăваратпăр.

17. Турă ырăпа усала уйăракан чĕрĕлӳ кунне палăртнă та ĕнтĕ. Çак кун пирки пĕр иккĕленӳ те пулас çук. 18. Чĕрĕлӳ кунĕ çитни çинчен пĕлтерсе сасă янăраса кайĕ. Сасă янăраса кайсан эсир пурте чĕрĕлсе вилтăпри айĕнчен тухатăр та шухăшăрсемпе ĕçĕрсемшĕн явап тытма, хăвăр мĕн тивĕçнине пĕлме Турă патне ушкăнăн-ушкăнăн каятăр. 19. Ун чухне тӳпе çурăлса кайĕ те уçса хунă хапха евĕр пулса тăрĕ. 20. Сăртсем-тусем çав кун вырăнĕсенчен хускалĕç те тĕпĕ-йĕрĕпе арканĕç, куçа курăннă евĕр кăна пулĕç. 21. Усал туса çылăха кĕнĕ çынна тамăк вучĕ хупăрласа явса илĕ. 22. Турă Сăмахĕнчен иртсе çылăха кĕрекенсем, намăса çухатнă чыссăр çынсем çулăм ытамне лекĕç те 23. Ĕмĕр-ĕмĕр çунса асапланĕç. 24. Вĕсем сулхăн та, ăша кантаракан шыв та кураймĕç. 25. Тамăкра вĕсем вĕрекен шĕвекпе тамăкри чунсен пӳрне ĕçсе пурăнĕç. 26. Вĕсем хăйсен чыссăр та çылăхлă ĕçĕсемпе çакна тивĕçĕç! 27. Турă Сăмахне тĕпе хурса пурăнман çынсем Турă умĕнче явап тытма тивнине ĕненмен. Вĕсем çĕр çинчи

пурнăç илемĕпе киленсе пурăннă, усал туса çылăха кĕнĕ. 28. Вĕсем Турă пĕлтернĕ Сăмаха йышăнман, Турă Сăмахне суя сăмах вырăнне хунă. 29. Анчах та Эпир пирĕштисене çынсем мĕн тунине, мĕн ĕçлесе пурăннине пĕтĕмпех çырса пыма хушнă. 30. «Ĕçĕрсемпе тивĕçнĕ тамăк асапне туллин тутанăр! Эпир çак асапа вăй парса тăрăпăр!» – тейĕç вĕсене.

31. Турă умĕнче çылăха кĕме хăракансене сăваплă вырăн кĕтет. 32. Çăтмахра вĕсене йывăç пахчисемпе иçĕмлĕхсем, 33. Тулли кăкăрлă тантăш хĕрупраçсем, 34. Çăтмах сĕткенĕпе тулли алтăрсем кĕтсе илĕç. 35. Çăтмахра вĕсем пуш сăмах çапса ларнине те, суя сăмах каланине те илтмĕç. 36. Турă умĕнче çылăха кĕме хăракан, Турă Сăмахне тĕпе хурса пурăнакан çынсене парне кĕтет. 37. Çăтмахри пурнăç – Турă парни. Çăтмахри пурнăç – тӳпепе çĕр, çĕрпе пĕлĕт хушшинчи чунсен Турри панă парне. Çăтмахри пурнăç – мĕн пур чуна Хăйĕн ырăлăхне паракан Турă панă парне. Явап кунĕ çитсен Турă умĕнче никам та пĕр сăмах та чĕнеймĕ, никам та тавлашаймĕ. 38. Çав кун çитсен Гавриилпа ытти пирĕштисем ретĕн-ретĕн тăрĕç. Çав кун çитсен никам та мĕн пур чуна Хăйĕн ырăлăхне паракан Турă ирĕк памасăр калаçмĕ. Турă ирĕк панипе калаçакан чун чăннине кăна калĕ, пĕр сăмах та суймĕ. 39. Явап кунĕ – чăнлăх. Явап кунĕ пирки пĕри те ан иккĕлентĕр. Çавăнпа та тамăк асапĕнчен çăлăнса юлас текен çын тӳрĕ çул суйласа илтĕр, Турă Сăмахне тĕпе хурса пурăнтăр, хăйне Турă умĕнче çылăха кĕресрен упратăр, ырă ĕçсем тутăр.

40. Адам ывăлĕсем! Эпир сире явап кунĕ çинчен пĕлтертĕмĕр, хăвăра çав кун асапĕнчен упрама асăрхаттарса каларăмăр. Явап кунĕ çитсен кашни чун хăйĕн аллипе мĕн тунине хăйĕн куçĕпе хăй курĕ. Çавăнпа та çав кун çитсен суя тĕнпе пурăннă çын: «Эх! Ним ырри те кĕтмест мана! Явап кунĕ çитмен пулсан, мана чун кĕртмен пулсан мĕн тери аван пулнă пулĕччĕ!» – тесе ӳкĕнĕ.

## 79. «Тăпăлтарса кăларакан» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕрелле çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Суя тĕнпе пурăннă çын чунне васкамасăр та асаплантарса тăпăлтарса кăларакан пирĕштисене асăнса тупа тăватăп! 2. Чăн тĕнпе пурăннă çын чунне асăрханса та асап кӳрес мар тесе кăларакан пирĕштисене асăнса тупа тăватăп! 3. Турă хушнипе тӳпере васкаса шăвакан пирĕштисене асăнса тупа тăватăп! 4. Пĕр-пĕринчен иртсе Турă хушнине пурнăçлама васкакан пирĕштисене асăнса тупа тăватăп! 5. Турă хушнине пурнăçласа тăракан пирĕштисене асăнса тупа тăватăп! 6. Явап кунĕ çитни çинчен пĕлтерсе сасă янăраса кайĕ те, çĕр чĕтренĕ, çĕр çинче мĕн пурри пĕтĕмпех арканĕ, мĕн пур чĕрĕ чун вилсе пĕтĕ. 7. Унтан сасă иккĕмĕш хут илтĕнĕ те, вилнисем чĕрĕлсе тăрĕç. 8. Суя тĕнпе пурăннă çынсем ун чухне чĕререн хăраса тăрĕç, 9. Нимĕн те ăнланманнипе, намăс курнипе вĕсен куçĕсем çав тери кичем пулĕç. 10. «Пире чун кĕртсе пурнăç парнелерĕç-им? Унчченхи сăн-сăпатпа кĕлеткене тавăрса пачĕç-им? 11. Эпир вилнĕччĕ-çке, çĕрсе тăпра пулнăччĕ!» – тейĕç вĕсем. 12. «Чун кĕртнинче пирĕншĕн ним ырри те пулас çук. Ним ырри те кĕтмест пире!» – тейĕç вĕсем. 13. Чун кĕртесси Турăшăн пĕрре те йывăр мар. Сасă янăраса кайĕ те, 14. Пурте чĕрĕлсе вилтăпри айĕнчен тухĕç, шухăшĕсемпе ĕçĕсемшĕн явап тытма пухăнĕç.

15. Моисейпе мĕн пулса иртни çинчен каланине илтнĕ-и эсĕ? 16. Турă ăна сăваплă Това тăрăхне чĕнсе илнĕ те çапла хушнă: 17. «Фараон патне кай та ăна тӳрĕ çул çине тăма, чăн тĕне таврăнма чĕнсе кала. Вăл Турра пăхăнмасăр пурăнать, усал туса çылăха кĕрет. 18. Ун патне кай та: «Фараон! Эсĕ суя тĕн тасамарлăхĕнчен, çылăхусенчен тасалас теместĕн-и? 19. Эпĕ сана тӳрĕ çул çине тăма пулăшăп. Эсĕ Турă умĕнче çылăха кĕме хăракан пулăн», – тесе кала».

20. Çакăн хыççăн Моисей фараона чăнлăха çирĕплетекен çав тери асамлă та тĕлĕнтермĕш пулăм кăтартнă. 21. Анчах та фараон пур-пĕрех Моисее итлемен, унăн сăмахне йышăнман, Турă хăвачĕпе пулса иртнĕ асамлă пулăма ĕненмен. 22. Унтан вăл Моисейрен пăрănса утнă та Турă элчине хирĕç тăма, ăна усал тума шут тытнă. 23. Фараон хăйĕн керменне таврăнсан патшалăхри чи сумлă та паллă тухатмăшсемпе юмăçсене пухнă та: 24. «Эпĕ – çӳлти турă! Мана ĕненсе пурăнăр!» – тенĕ. 25. Усал туса çылăха кĕнĕшĕн, хăйне мăнна хурса «Эпĕ çӳлти турă!» тесе каланăшăн Турă фараона çак пурнăçра та, леш тĕнчере те асап курмалла тунă. 26. Турă умĕнче çылăха кĕме хăракансемшĕн фараон шăпи тĕслĕх вырăнĕнче.

27. Чĕрĕлӳ кунне ĕненмен çынсем! Сире чун кĕртсе пурнăç парнелеме йывăр-и е тӳпене пултарма йывăр?! Турă çӳл тӳпене пултарса 28. Сирĕн çийĕн хăпартнă. Турă йĕркеленипе тӳпере пĕр çитменлĕх те, пĕр кăлтăк та çук. 29. Турă пултарнипе çĕрле тĕттĕм, ирпе çутă килет. 30. Çӳлти Турă çĕр пултарнă та ăна чĕрĕ чунсене пурăнма сарса панă. 31. Вăл çĕр айĕнчен çăлкуçсем тапса тăмалла, çынсемпе чĕр чунсене тăранса пурăнма йывăç-курăк ӳсмелле тунă, 32. Сăртсем-тусем пултарса çирĕплетнĕ. 33. Çакна пĕтĕмпех Турă сире валли тата эсир пăхса пурăнакан выльăх-чĕрлĕх валли пултарнă.

34. Хăрушă инкек (чĕрĕлӳ кунĕ) çитнĕ кун 35. Этем хăйĕн пурнăçне, хăйĕн мĕн пур ĕçне, хăй мĕн патне ăнтăлнине пĕтĕмпех аса илĕ. 36. Тамăк çулăмне курма тивĕç чунсем вăл кун тамăк вутне курĕç. 37. Турă Сăмахĕнчен иртсе 38. Леш тĕнче пирки маннă, çут тĕнчери пурнăçпа улталаннă, çĕр çинчи пурнăç тыткăнне лекнĕ çын 39. Тамăк вутне кĕрсе тĕпленĕ.

40. Çӳлти Турă умĕнче çылăха кĕме хăранă, чăн тĕнпе пурăнса хăйне алра тытма пултарнă çын 41. Çăтмаха кĕрсе тĕпленĕ.

42. Çынсем санран явап кунĕ пирки «Хăçан çитĕ вăл?» тесе ыйтаççĕ. 43. Анчах та эсĕ пĕлместĕн, çавăнпа та

çынсене явап кунĕ хăçан çитесси çинчен калаймастăн. 44. Çакна пĕртен-пĕр Турă çеç пĕлет. Урăх никам та явап кунĕ хăçан çитессине пĕлмест. 45. Эсĕ – халăха Турă Сăмахне пĕлтерекен, явап кунĕнчен хăракансене вĕрентсе тĕрĕс çул кăтартакан çын çеç. 46. Явап кунĕ çитнине кашни çын хăй куçĕпе хăй курĕ. Çав кун çак тĕнчери пурнăç вĕсемшĕн пĕр каç кӳлĕм е пĕр ир чухлĕ кăна тăсăлнăн туйăнĕ.

## 80. «Кăмăлсăрланнă» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Пĕррехинче Турă Сăмахне пĕлтерекен элчĕ кăмăлсăрланнă та çаврăнса тăнă, 2. Мĕншĕн тесен ун патне пĕр суккăр çын пырса чăн тĕне вĕрентме ыйтса сумлă та пуян çынсемпе калаçма чăрмантарнă. 3. Мухаммад! Тен, çак çын тӳрĕ çул çине тăрса çылăхсенчен тасалĕччĕ? 4. Тен, вăл санăн кашни сăмахна ăша хывĕччĕ те йăлтах астуса юлĕччĕ? Тен, эсĕ вĕрентсе калани ăна пурнăçра пулăшса пырĕччĕ? 5-6. Анчах та эсĕ унран пăрăнса Турра ĕненмен пуян та сумлă çынсемпе калаçас, вĕсене чăн тĕне йышăнма чĕнсе калас терĕн. 7. Чăн тĕншĕн чунĕпе хыпса çунман çын Турра ĕненес тата çылăхĕсенчен тасалас теменни сана айăп пулас çук. 8. Çав вăхăтрах эсĕ Турра ĕненсе чăн тĕне йышăнас тесе, тӳрĕ çул çине тăрас тесе, 9. Турă умĕнче çылăха кĕме хăранипе килнĕ çынпа 10. Калаçмастăн, унран пăрăнса утатăн. 11. Çапла туни тĕрĕс мар. Коран сăмахĕсем çынсене тӳрĕ çул уçса параççĕ, тĕрĕс пурăнма вĕрентеççĕ. 12. Çавăнпа та чăн тĕне йышăнса тӳрĕ çулпа утас текен çын Турă Сăмахĕнчен вĕренсе пытăр. 13. Сăваплă Коран йĕркисем сумлă та мухтавлă кĕнекере упранаççĕ. 14. Вĕсем çав тери хисеплĕ те таса, сăваплă. 15. Вĕсенчен пирĕштисем Çӳлти Турă хушнипе çырса илеççĕ те Турă

суйланă çынсене пĕлтереççĕ. 16. Çак пирĕштисем çав тери чыслă та ырă.

17. Суя тĕнпе пурăнакан çын мĕскĕн те телейсĕр! Мĕн тери чыссăр вăл! Турă ăна темĕн чухлĕ ырлăх панă, пурнăç парнеленĕ. Анчах та вăл çакăншăн тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррине тав тума пĕлмест, Турă Сăмахне йышăнмасть, чăн тĕне таврăнмасть. 18. Çӳлти Турă ăна мĕнрен пултарнине астăвать-и çак этем? 19. Турă этеме вăрлăх тумламĕнчен пултарса малалла аталанмалла тунă. 20. Турă хăвачĕпе этем çут тĕнчене килет. Турă çын пурнăçне çăмăллатса тӳрĕ çул кăтартнă, чăн тĕн çинчен пĕлтернĕ. 21. Турă хушнипе этем патне вилĕм килет те, этем çут тĕнчерен уйрăлса каять. 22. Палăртнă кун çитсен Турă ăна чун кĕртсе вилтăпри айĕнчен кăларĕ. 23. Анчах та Адам ывăлĕхĕрĕ Турă Сăмахне итлесшĕн мар. Çын Турра ĕненмест, чăн тĕне тытса пымасть, пурнăçне тĕрĕс пурăнса ирттерме ĕмĕтленмест. 24. Этем хăй тăранса пурăнакан апатçимĕç пирки шухăшласа пăхтăр. Çак апата ăна Кам панине ăнланса илтĕр. 25. Турă хушнипе тӳперен вăйлă çумăр çăвать. 26. Турă хушнипе ӳсен-тăрана ӳсме çĕр çурăлать. 27. Турă хушнипе çĕр çинче тыră-пулă, 28. Иçĕм çырли, курăк, 29. Çу тата пальма йывăçĕсем, 30. Ешĕл пахчасем, 31. Тĕрлĕ пахча-çимĕç, улма-çырла ӳсет, улăх-çаран ешерет. 32. Çак ырлăха Çӳлти Турă сире тата сирĕн выльăхчĕрлĕхĕре тăранса пурăнма панă.

33. Явап кунĕ çитни çинчен пĕлтерекен сасă иккĕмĕш хут янăранă кун 34. Этем тарса пытанас тейĕ. Хăранипе вăл çывăх тăванĕсене те, 35. Амăшĕпе ашшĕне те, 36. Арăмĕпе ачисене те аса илмĕ. Вĕсемпе мĕн пулса иртни çинчен пĕрре те пăшăрханмĕ. 37. Çав кун кашни чун хăйĕн çинчен кăна шутлĕ, хăйĕн шăпишĕн кăна куляне. 38. Явап кунĕ çитсен этемлĕхĕн пĕр пайĕ çав тери телейлĕ пулĕ. Вĕсен пичĕсем çуталса тăрĕç. 39. Вĕсем чунтан савăнĕç, йăл кулĕç. 40. Тепĕр пайĕ çав кун тусанпа витĕннĕ евĕр пулĕ. 41. Вĕсен пичĕсенче пĕр савăнăç палли те пулмĕ. Вĕсене

çав кун кичем те хăрушă пулĕ. 42. Хăйсен çылăхĕсене курас темен тата суя тĕнпе пурăннă чыссăр çынсем явап кунне çапла кĕтсе илĕç.

## 81. «Тĕттĕме кĕни» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕрелле çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Хĕвел хăйĕн çутине çухатсан, хĕвеле пĕтĕрсе хурсан, 2. Çăлтăрсем хăйсен çутине çухатса тăкăнса пĕтсен, 3. Сăртсем-тусем вырăнĕнчен хускалсан, 4. Вун иккĕмĕш уйăха çитнĕ пĕтĕ тĕве амине пăхакан çын тупăнмасан, 5. Мĕн пур тискер чĕр-чун пĕрле пуçтарăнсан, 6. Тинĕс шывĕ сас парса çыранран тухсан, 7. Чун каялла ӳт-пĕве таврăнсан, 8. Çĕр айне чĕрĕллех чавса хунă хĕрачаран 9. Вăл мĕн айăпа кĕни çинчен, ăна мĕншĕн çапла асаплантарса вĕлерни çинчен ыйтса пĕлсен, 10. Этем хăйĕн мĕн пур ĕçне çырса пынă тĕркене салтсан, 11. Çӳл тӳпе аркан-са йăтăнсан, 12. Тамăк вучĕ вăй илсе çунма тытăнсан, 13. Çăтмах таса пурнăçпа пурăннă çын патне çывхарсан, 14. Кашни чун хăй мĕн тивĕçнине пĕлĕ, хăй аллипе тунă ĕçсем ăна мĕн патне илсе тухнине курĕ.

15-16. Çук! Çук! Тӳпере шăвакан, çӳл тӳперен çухалакан çутăна асăнса тупа туса калатăп! 17. Тĕнчене хупăрласа килекен каç тĕттĕмне асăнса тупа туса калатăп! 18. Ире май килекен лăпкă çиле тата уçă сывлăша асăнса тупа туса калатăп! 19. Сăваплă Коран – Турă Мухаммада пархатарлă Гавриил пирĕшти урлă пĕлтернĕ Сăмах. 20. Гавриил пирĕшти вăл – аслă вăй-хăватлă пирĕшти. Вăл патша пуканĕпе пĕртен-пĕр хуçа пулса тăракан Турă умĕнчи хисеплĕ пирĕшти. 21. Ăна ытти пирĕштисем пăхăнса тăраççĕ. Турă Гавриил пирĕштине Хăйĕн Сăмахне этем патне илсе çитерме шанать.

22. Сире Тура Самахне пĕлтерекен ҫын, сире вĕрентсе калакан ҫын усал вăй ытамне лекмен. 23. Вăл Гавриил пирĕштине янкăр тӳпере хăй куҫĕпе хăй курнă. 24. Вăл хăй илтнĕ Турă Сăмахне халăха пĕлтермесĕр тăман. Вăл Турă уҫса панă Сăмаха этемлĕхе пĕлтерет. 25. Сăваплă Коран – чул асапне тивĕҫ шуйттан сăмахĕ мар. 26. Сăваплă Корана йышăнмасан ăҫта каяс тетĕр? Хăш ҫулпа утас тетĕр? Турă Сăмахне пăрахăҫласа ăҫта васкатăр? 27. Сăваплă Коран мĕн пур чуна тĕрĕс пурăнма вĕрентсе калать, ăс-тăн парать. 28. Тӳрĕ ҫул ҫине тăрас текен ҫын Турă Сăмахне йышăнать те ăна пăхăнса пурăнать. 29. Анчах та тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррин ирĕкĕ пулмасан эсир нихăҫан та тӳрĕ ҫул ҫине тăрас ҫук. Вăл мĕн пур чунпа пĕртен-пĕр хуҫа пулса тăрать.

## 82. «Кисренсе ҫурăлни» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ ҫынна ĕмĕрхи асапран ҫăлакан Турă ячĕпе!

1. Тӳпе кисренсе ҫурăлсан, 2. Ҫăлтăрсем тăкăнса пĕтсен, 3. Мĕн пур тинĕс пĕр тинĕсе пĕрлешсен, 4. Вилтăпри уҫăлсан, вилтăпри айĕнче выртакан ҫын чĕрĕлсе тухсан, 5. Кашни чун хăй тунă тата тумасăр хăварнă ырă тата усал ĕҫне курĕ.

6. Этем! Мĕншĕн эсĕ ырă кăмăллă та Хăйĕн чурисемшĕн нимĕн те хĕрхенмен Турă ҫинчен суйса каланине итлетĕн? Мĕншĕн эсĕ суя ҫулпа утатăн? 7. Турă сана пултарса пурнăҫ парнеленĕ, санăн сăн-кĕлеткӳне, санăн ӳт-пĕве йĕркеленĕ. 8. Вăл сана Хăй палăртнă пек пултарнă, сан сăн-сăпатна Хăй кăмăлне кура йĕркеленĕ. 9. Ҫук! Ҫук! Эсĕ явап кунне ҫав-ҫавах ĕненместĕн! Эсĕ ăна чăнлăх тесе йышăнмастăн!

10. Чăн калатăп: кашни ҫын ҫумĕнче икĕ упракан пирĕшти пур. 11. Вĕсем эсир тунă кашни ĕҫе ҫырса пыраҫҫĕ. 12. Вĕсем эсир тăвакан кашни ĕҫе кураҫҫĕ те пĕлеҫҫĕ.

13. Чăн калатăп: таса пурнăçпа пурăнакан çын леш тĕнчере çăтмахра пулĕ. 14. Чăн калатăп: çылăха кĕрсе пурăнакан çын леш тĕнчере тамăкра çунса асапланĕ. 15. Ăна çав хăрушă вырăна явап кунĕ çитсен кĕртĕç. 16. Çылăха кĕрсе пурăннă çын çак шăпаран тараймĕ те çăлăнса юлаймĕ. 17. Явап кунĕ еплерех пулнине, çав кун мĕн пулса иртнине санăн ăçтан пĕлес-ха ĕнтĕ? 18. Чăн калатăп: явап кунĕ еплерех пулнине, çав кун мĕн пулса иртнине санăн ăçтан пĕлес-ха? 19. Çав кун çитсен пĕр çын тепĕр çынна нимĕнпе те пулăшаймĕ. Çав кун Турă хушни çеç пулĕ. Çав кун пĕр Турă çеç пуринпе те пĕртен-пĕр хуçа пулĕ.

## 83. «Виçерен катса улталакан» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Суту-илӳ тунă чухне виçерен катса çынна улталакана инкек кĕтет! 2. Вăл çынна улталать пулин те, хăйне тивĕçекен пая туллин илет, хăйне тивĕçекен пая никама та памасть. 3. Пĕр-пĕр япала виçине палăртнă чухне виçерен вăрттăн катса çынна тăкак кӳрес текене инкек кĕтет! 4. Çапла хăтланса çылăха кĕрекен çын чĕрĕлӳ кунĕ çинчен пĕрре те шутламасть-ши? 5. Вăл аслă кун çитсен Турă ăна чун кĕртмест тет-ши? 6. Çав кун çитсен мĕн пур чун тĕнчесен пĕртен-пĕр Турри умне явап тытма чĕрĕлсе тухса тăрĕ.

7. Çук! Çук! Чăн калатăп: чыссăр та намăса пĕлмен çын ĕçĕсене пухса çырнă кĕнеке тамăк тĕпĕнче упранать! 8. Тамăк тĕпĕнче упранакан кĕнеке мĕн иккенне санăн ăçтан пĕлес-ха ĕнтĕ? 9. Тамăк тĕпĕнче упранакан кĕнеке вăл – çылăха кĕрсе пурăннă этемĕн мĕн пур ĕçне пухса çырнă кĕнеке. 10. Чăнлăха хирĕçлесе пурăннă çынна çав кун инкек кĕтет. 11. Явап кунне чăнлăх тесе йышăнман

çынна çав кун инкек кĕтет. 12. Çылăха кĕрсе пурăнакан çын кăна, йĕркене пăсса пурăнакан çын кăна явап кунне суя тесе калĕ. 13. Вăл пĕр-пĕр çын Турă Сăмахне вуланине илтсен: «Çак Кĕнеке – ĕлĕк-авал пурăннă халăхсен юмах-халапĕ кăна!» – тесе кăшкăрать. 14. Çук! Çук! Çак этемĕн чĕри хăй тунă усал ĕçсемпе сиенленсе тутăхса ларнă. Çак этемĕн чĕри хăй тунă усал ĕçсене пула чаршавпа витĕннĕ. 15. Чăн калатăп: явап кунĕ çитсен вăл Турă ырăлăхне курас çук, ун чухне Турă ырăлăхĕ ăна çутта кăларас çук. 16. Ăна тамăк вутне перĕç. 17. Мĕскĕн чуна: «Эсĕ çак куна ĕненмен! Эсĕ Турă пĕлтернĕ чăнлăха суя тенĕ!» – тесе калĕç.

18. Чăн калатăп: ĕмĕрне таса пурнăçпа пурăнса ирттернĕ çын ĕçĕсене çырса хунă кĕнеке çăтмахра çӳллĕ вырăнта упранать. 19. Çăтмахра çӳллĕ вырăнта упранакан кĕнеке мĕн иккенне санăн ăçтан пĕлес-ха ĕнтĕ? 20. Çăтмахра çӳллĕ вырăнта упранакан кĕнеке вăл – таса пурнăçпа пурăннă этемĕн мĕн пур ĕçне пухса çырнă кĕнеке. 21. Çав кĕнекене пирĕштисем упраççĕ. Пирĕштисем çав кĕнеке пирки çирĕплетсе калаççĕ. 22-23. Чăн калатăп: ĕмĕрне таса пурнăçпа пурăнса ирттернĕ çын леш тĕнчере çемçе вырăн çинче выртса çăтмах пахчи çине пăхса киленĕ. 24. Эсĕ унăн сăн-пичĕ çăтмах киленĕвĕпе çуталса тăнине курăн. 25. Çăтмахра ăна паха та чаплă сĕткенпе сăйлĕç. 26. Çав сĕткен мускус тутиллĕ пулĕ. Пĕр-пĕринпе ăмăртас текенсем ырă ĕçсем туса ăмăртчăр, ырă ĕç туса мала тухма тăрăшчăр. 27. Çав сĕткене çăтмахри тасним ятлă çăлкуç шывĕпе хутăштарĕç. Çав çăлкуçран тапса тăракан шыв ырă шăршăллă. Вăл калама çук тутлă. 28. Турă çумĕнчи чунсем тасним ятлă çăлран ĕçеççĕ.

29. Чăн калатăп: çылăха кĕме хăраман çын та, суя тĕнпе пурăнакан çын та Турра ĕненекен çынран кулса пурăннă. 30. Суя тĕнпе пурăнакансем Турра ĕненекен çын утса пынине курсан пĕр-пĕрне куç хĕснĕ те чăн тĕнпе пурăнаканран кулнă. 31. Суя тĕнпе пурăнакан çын тăван

килне ҫывӑх тӑванӗсем патне таврӑнса та Турра ӗненекен ҫынран кулма чарӑнман, вӑл чӑн тӗнпе пурӑнакан ҫынна усал тунипе савӑннӑ. 32. Вӗсем чӑн тӗнпе пурӑнакан ҫынна курсан: «Акӑ улталанса суя ҫул ҫине тӑнӑ ҫын пырать! Акӑ вӑл аташса чӑнлӑхран пӑрӑннӑ этем!» – тенӗ. 33. Анчах та вӗсен ҫумӗнчи пирӗштисем кашни ӗҫе, кашни сӑмаха ҫырса пынӑ, пӗтӗмпех шута илнӗ.

34-35. Таса пурнӑҫпа пурӑннӑ ҫынсем явап кунӗ ҫитсен ҫӑтмахра канса выртнӑ чухне нумайтурӑлӑх тӗнне тытса пынӑ, ӗненӳсӗр пурӑннӑ ҫынран хӑйӗнчен кулӗҫ. 36. Чыссӑр та намӑс пурнӑҫпа пурӑннӑ ҫын хӑйӗн усал ӗҫӗсемшӗн явап тытӗ.

## 84. «Кисренсе ҫурӑлни» ятлӑ сыпӑк

Хӑйӗн ырӑлӑхне мӗн пур чуна паракан, таса чунчӗреллӗ ҫынна ӗмӗрхи асапран ҫӑлакан Турӑ ячӗпе!

1. Тӳпе кисренсе ҫурӑлсан, 2. Тӳпе хӑйӗн тивӗҫне пурнӑҫласа Турра туллин пӑхӑнсан, 3. Сӑртсем-тусем арканнипе ҫӗр тӳрленсе сарӑлсан, 4. Ҫӗр хӑйӗн ӑшӗнче упранакан этеме, ылтӑн-кӗмӗле ҫиеле кӑларса пуш-пушӑ тӑрса юлсан, 5. Ҫӗр хӑйӗн тивӗҫне пурнӑҫласа Турра туллин пӑхӑнсан, 6. Эсӗ, этем, Турӑ патне васкаса кайӑн, Турӑ умне тухса тӑрӑн.

7. Хӑйӗн ӗҫӗсене ҫырса пынӑ кӗнекене сылтӑм алӑпа илме тивӗҫ ҫын телейлӗ пулӗ. 8. Вӑл Турӑ умӗнче ҫӑмӑллӑнах явап тытӗ те 9. Таса пурнӑҫпа пурӑннӑ ҫынсем патне ҫӑтмаха чунтан савӑнса таврӑнӗ. 10. Хӑйӗн ӗҫӗсене ҫырса пынӑ кӗнекене сулахай алӑпа илме тивӗҫ ҫын телейсӗр пулӗ. 11. Вӑл хӑйӗн кичем те хӑрушӑ шӑпине курсан часах вилес тейӗ. 12. Вӑл йӑлкӑшса ҫунакан тамӑк вутне кӗрӗ. 13. Вӑл ҫӗр ҫинчи пурнӑҫне хӑйӗнпе пӗр шухӑшлӑ ҫынсемпе выляса-кулса ирттернӗ. 14. Вӑл Турӑ умне явап

тытма тухса тăрасси ҫинчен шутламан. Вăл ҫакна суя сăмах вырăнне ҫеҫ хунă.

15. Чăн калатăп: тĕнчесен пĕртен-пĕр Турри ҫын тунă кашни ĕҫе курать, Вăл этем тунă кашни ĕҫе пĕлет.

16. Каҫ кӳлĕм хĕвел аннă вăхăта асăнса тупа туса калатăп! 17. Ҫĕрлене асăнса тупа туса калатăп! Тĕнчене ытамлакан ҫĕрлехи тĕттĕме асăнса тупа туса калатăп! 18. Тулли уйăха асăнса тупа туса калатăп! 19. Усал ĕҫ туса ҫылăха кĕрекен ҫын пурнăҫĕ улшăнса пырĕ, вăл пĕр тапхăртан тепĕр тапхăра куҫса пырĕ.

20. Мĕншĕн вĕсем тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррине ĕненмеҫҫĕ? Мĕншĕн вĕсем Турă Сăмахне йышăнмаҫҫĕ? 21. Мĕншĕн вĕсем Коран йĕркисене вуланине илтсен те Турра мухтав сăмахĕпе асăнмаҫҫĕ? Мĕншĕн вĕсем Коран вуланине илтсен те Турăран каҫару ыйтса пуҫҫапмаҫҫĕ? 22. Турра ĕненмен ҫын, Турă Сăмахне йышăнман ҫын Корана суя тет. 23. Ҫӳлти Турă ҫав ҫын мĕн ҫинчен шутласа-ĕмĕтленсе пурăннине пĕтĕмпех пĕлет. 24. Ĕненӳсĕр пурăнакан ҫынна хăрушă асап ҫинчен пĕлтерсе «савăнтар»! 25. Тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррине ĕненсе ырă ĕҫ тунă ҫын тамăк асапĕнчен ҫăлăнса юлĕ. Ăна Турăран иксĕлми телей тата парне кĕтет.

## 85. «Ҫăлтăрсен ушкăнĕ» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ ҫынна ĕмĕрхи асапран ҫăлакан Турă ячĕпе!

1. Ҫăлтăрсен ушкăнĕллĕ тӳпене асăнса тупа туса калатăп! 2. Шантарса каланă куна асăнса тупа туса калатăп! 3. Ҫирĕплетсе калакана тата вăл мĕн ҫинчен ҫирĕплетсе каланине асăнса тупа туса калатăп! 4. Канав чавса хатĕрленĕ ушкăн ҫĕр пичĕ ҫинчен ҫухалтăр! Унăн йĕрĕ-палли те ан юлтăр! Ăна хăрушă асап хупăрласа

илтĕр! 5. Вĕсем чавса хатĕрленĕ канава вут-шанкăпа тултарнă та кăвайт чĕртнĕ, 6. Турра ĕненекенсене çав вутта пăрахса çунтарнă. Унтан вĕсем пурте канав тавра пуçтарăнса тăнă, 7. Чăн тĕнпе пурăнакансем мĕнле асапланни çине пăхса ларнă. 8. Çак чыссăр халăх çынсене тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррине – аслăран та аслă, хăватлăран та хăватлă Турра, мĕн пур мухтава тивĕç Турра ĕненнĕшĕн хăрушă асап курмалла тунă. 9. Таса пурнăçпа пурăнакан çын çак асапа тӳпепе тата çĕрпе пĕртен-пĕр хуçа пулса тăракан Турра ĕненнĕшĕн тивĕçнĕ. Чăн калатăп: Турă пĕтĕмпех курать, пĕтĕмпех пĕлет. 10. Ĕненӳпе пурăнакан арçынна тата ĕненӳпе пурăнакан хĕрарăма асап кăтартакан çынна, çылăхĕшĕн ӳкĕнмен çынна тамăк вучĕ кĕтет! 11. Чăн калатăп: Турра ĕненсе чăн тĕне çирĕп тытса пурăннă çынна, усал ĕçрен пăрăнса ырă ĕç тума тăрăшнă çынна таса çăлкуçсемпе пуян çăтмах пахчи кĕтет. Çав пахчана кĕме тивĕç чун чăннипех те телейлĕ. 12. Чăн калатăп: Турă хушнипе килекен асап ытла та хăрушă!

13. Чăн калатăп: Турă пурнăç парнелет. Турă çут тĕнчерен уйрăлса кайнă çынна чун кĕртсе пурнăç тавăрса парĕ. 14. Турă Хăй пултарнă чуна хĕрхенсе каçарать. Турă Хăйĕн чурине юратупа ытамлать. 15. Вăл патша пуканĕпе пĕртен-пĕр хуçа пулса тăрать. Турă мĕн пур мухтава тивĕç! 16. Турă Хăй мĕн тăвас тенине тăвать.

17. Эсĕ суя тĕнпе пурăнакансен çарĕ çинчен калани-не илтнĕ-и? 18. Эсĕ фараон çинчен, самуд халăхĕ çинчен каланине илтнĕ-и? 19. Ĕненӳсĕр пурăнакан çын, суя тĕнпе пурăнакан çын Турă вĕрентсе каланине пур-пĕрех йышăнасшăн мар. 20. Анчах та улталанса пурăнакан çын Турăран тараймĕ.

21. Çак Сăмах – мухтавлă Коран. Çак Сăмах – чăн таса Сăмах! 22. Вăл тӳпере кĕнеке тĕшшинче упранать.

## 86. «Çутă çăлтăр» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕрелле çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Çӳл тӳпене тата çутă çăлтăра асăнса тупа туса калатăп! 2. Санăн çутă çăлтăр мĕн иккенне ăçтан пĕлес-ха ĕнтĕ? 3. Çутă çăлтăр вăл – çуталса тăракан çăлтăр! 4. Çумра пирĕшти пулман çын çук. Кашни çын çумĕнче унăн мĕн пур ĕçне çырса пыракан пирĕштисем пур.

5. Этем хăй мĕнрен пулса кайни çинчен тата Турă ăна мĕнрен пултарни çинчен шухăша кайтăр. 6. Турă этеме юхса тухакан шĕвекрен пултарнă. 7. Çав шĕвек кăкăр айĕнчен юхса тухать.

8. Чăн калатăп: Турă çут тĕнчерен уйрăлса кайнă çынна чун кĕртсе вилтăпри айĕнчен кăларĕ.

9. Турă этемĕн чун тĕпĕнчи мĕн пур шухăш-ĕмĕтне çиеле кăларĕ те этеме явап тыттарма чун кĕртĕ. 10. Çылăха кĕрсе пурăннă çын çав кун асапа хирĕç тăраймĕ, хăйне çак асапран çăлакан та, хăйне çак хĕн-хуртан хӳтĕлекен те тупаймĕ.

11. Çумăр çутаракан тӳпене асăнса тупа туса калатăп! 12. Йывăç-курăка ӳсме май парса çурăлакан çĕре асăнса тупа туса калатăп! 13. Çак Сăмах чăнлăхпа суяна уйăрать, тĕрĕс çул кăтартса парать. 14. Çак Сăмах – суя сăмах мар. Çак Сăмахра пĕр суя та çук.

15. Чăнлăха йышăнас темен çын усал шухăш-ĕмĕтпе пурăнать, усал ĕç тăвас тет. 16. Эпĕ çав çынна тивĕçлĕ хурав парăп, унăн мĕн пур усалне сирсе ярăп. 17. Ĕненӳсĕр пурăнакан çынна, суя тĕне тытса пыракан çынна улталанса пурăнма пар, вăл палăртнă вăхăт çитиччен хăй пурăнас тенĕ пек пурăнтăр.

## 87. «Çӳлти Турӑ» ятлӑ сыпӑк

Хӑйӗн ырӑлӑхне мӗн пур чуна паракан, таса чунчӗрелле çынна ӗмӗрхи асапран çӑлакан Турӑ ячӗпе!

1. Çӳлти Турӑ ятне мухтаса асӑн, Çӳлти Турӑ ятне мухтаса пурӑн. 2. Вӑл çут тӗнчери мӗн пур чуна пултарса пурнӑç парнеленӗ, Вӑл кашни чӗрӗ чунӑн сӑн-сӑпатне, ӳт-кӗлеткине çирӗплетнӗ. 3. Вӑл Хӑй пултарнӑ чунсен шӑпине, вӗсене çӗр çинче мӗн кӗтнине палӑртнӑ, этемлӗхе ултав çулӗпе утасран тӳрӗ çул кӑтартнӑ. 4. Вӑл выльӑхчӗрлӗхе тӑранса пурӑнма улӑх-çаранра курӑк çитӗнтерет, 5. Унтан çав курӑка хӗвелпе типӗтсе тӗксӗм тӗслӗ, ниме юрӑхсӑр тӑвать.

6. Эпир сана Коран йӗркисене вулама май парӑпӑр, эсӗ Турӑ пӗлтернине пӗтӗмпех астуса юлӑн. 7. Эсӗ Сӑваплӑ Коран йӗркисене яланах асра тытӑн, Турӑ манма хушнине çеç манӑн. Çут тӗнчене пултарнӑ Турӑ çынсем пурте курмалла мӗн тунине те, вӑрттӑн мӗн ӗçлесе пурӑннине те пӗлет. 8. Эпир сана пулӑшса пырӑпӑр, кирек епле ӗçе те çӑмӑллӑнах пурнӑçлама, тӗрӗс çул тупма май парӑпӑр. 9. Çынсене Турӑ Сӑмахне аса илтерсе калани усӑллӑ пулсан, чӑн тӗне тавӑрма, тӳрӗ çул çине тӑма чӗнсе кала, ырӑ сӗнӳ-канаш пар. 10. Турӑ умӗнче çылӑха кӗме хӑракан чун сан сӑмахна илтӗ, сан сӑмахна йышӑнӗ. 11. Чи телейсӗр чун кӑна сан сӑмахунтан пӑрӑнса утӗ, эсӗ вӗрентнине итлемӗ. 12. Çав мӗскӗн этем тамӑк вутне кӗрсе асапланӗ. 13. Тамӑкра вӑл вилес те çук, пурӑнас та çук. Хӑрушӑ шӑпа кӗтет ӑна! 14. Çылӑхран тасалма пӗлнӗ çын телейлӗ. 15. Вӑл Çӳлти Турӑ ятне мухтаса асӑннӑ, кӗлӗ вуланӑ, кӗлӗ йӗркине çирӗп тытса пынӑ. 16. Çапах та эсир çак тӗнчери пурнӑçа суйлатӑр, малашрӑхра мӗн кӗтнине манса çӗр çинчи пурнӑçшӑн чунпа хыпса çунатӑр. 17. Анчах та леш тӗнчери пурнӑç – юлашки пурнӑç пахарах та пуянрах, вӑл ӗмӗр-ӗмӗре тӑсӑлӗ. 18-19. Çакна Çӳлти Турӑ ӗлӗк-авал Авраампа Моисее панӑ кӗнекесенче пӗлтернӗ.

## 88. «Хупăрласа илекен» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Эсĕ мĕн пур тĕнчене хупăрласа илекен кун çинчен каланине илтнĕ-и? Эсĕ чĕрĕлӳ кунĕ çинчен каланине илтнĕ-и? 2. Çав кун çитсен хăшĕ-пĕрин сăнĕ ытла та хурлăхлă пулĕ. 3. Вĕсене пулни-иртни канăçсăрлантарĕ. Вĕсем йăлăхса çитнĕн, питĕ ывăннăн пулĕç. 4. Усал туса çылăха кĕрсе пурăннă çын тамăк вутĕнче çунса асапланĕ. 5. Унта ăна вĕрекен çăлран тапса тăракан шĕвек ĕçтерĕç, 6. Йĕплĕ-йĕплĕ çимĕç çитерĕç. 7. Çав çимĕçе çиекен çын самăрланас та, хырăм выçнине ирттерес те çук. 8. Çав кун çитсен хăшĕ-пĕрин сăнĕ ырăпа çуталса тăрĕ. 9. Вĕсем хăйсен ĕçĕсемпе, хăйсен пурнăçĕпе кăмăллă пулĕç. 10. Вĕсем çăтмах пахчине кĕме тивĕç пулĕç. 11. Вĕсем çăтмахра намăс сăмах та, усал сăмах та илтмĕç. 12. Вĕсене çăтмах пахчинче пĕр чарăнми тапса тăракан çăлкуçсем, 13. Сарса хатĕрленĕ вырт-малли вырăнсем, 14. Тулли курка-алтăрсем, 15. Ретĕн-ретĕн хурса тухнă минтерсем, 16. Сарса тухнă кавирсем кĕтсе илĕç.

17. Мĕншĕн чăнлăха йышăнас темен çын нихăçан та шухăша каймасть? Мĕншĕн вăл тĕве мĕнле пулса кайни çинчен шутласа та пăхмасть? 18. Мĕншĕн вăл тӳпе мĕнле хăпарса çирĕпленни çинчен шутламасть? 19. Мĕншĕн вăл сăртсем-тусем мĕнле пулса çирĕпленни çинчен шутламасть? 20. Мĕншĕн вăл çĕр мĕнле çав тери анлă пулни çинчен шутламасть?

21. Турă сана халăха вĕрентсе калама янă. Çавăнпа та халăха вĕрентсе кала, тĕрĕс пурăнма вĕрент. 22. Анчах та эсĕ унпа хуçа пулаймастăн, хăв вĕрентсе каланине вĕсене вăйпа йышăнтараймастăн. 23. Турă панă тĕнрен пăрăннă çынна, Турă панă тĕне хирĕçлекен çынна, Турă Сăмахне йышăнман çынна хирĕç тăр! 24. Турă ăна туллин явап тыттарĕ те ăна хăрушă асап курмалла тăвĕ. 25.

Мĕншĕн тесен вăл çут тĕнчерен уйрăлса кайсан Пирĕн пата таврăнать. 26. Пирĕн пата таврăнсан Эпир ăна явап тыттарăпăр та унран хăй тунă кашни ĕçшĕн ыйтса илĕпĕр.

## 89. «Шурăмпуç» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕрелле çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Шурăмпуç Туррине асăнса тупа туса шантаратăп! 2. Зуль-хиджа уйăхĕнчи пĕрремĕш вунă куна асăнса тупа туса шантаратăп! 3. Мăшăрлă тата мăшăрсăр чуна, мăшăрлă тата мăшăрсăр япалана асăнса тупа туса шантаратăп! 4. Кун çутипе сирĕлсе каякан каç тĕттĕмне асăнса тупа туса шантаратăп! 5. Ăслă-тăнлă çын Турă тупа туса шантарнине ĕненме тивĕç-и? 6-8. Турă çырнипе адит халăхĕпе мĕн пулса иртнине пĕлетĕн-и? Мăн юпасем çинче капмар керменсем çĕкленĕ ирам халăхĕпе мĕн пулса иртнине пĕлетĕн-и? Вĕсене çитекен халăх ĕмĕрне те пулман та, çук та. 9. Турă çырнипе самуд халăхĕпе мĕн пулса иртнине пĕлетĕн-и? Çак халăх сăрт-ту касса тĕрлĕ çурт-йĕр тунă. 10. Турă çырнипе фараонпа мĕн пулса иртнине пĕлетĕн-и? Фараон вăл калама çук пуян та сумлă çын пулнă. Вăл хĕн-хур курма пултарасси çинчен никам та шутламан. Суя тĕнпе пурăнакан халăх ăна ăмсаннă. 11. Вĕсем пурте Турă Сăмахĕнчен иртсе çылăха кĕнĕ, вĕсем Турă çирĕплетнĕ йĕркене пăсса усал тунă. 12. Вĕсем усал ĕçре яланах малта пулнă, халăха та чыссăр пурнăçпа пурăнма хистесе каланă. 13. Турă çакăншăн вĕсем çине тӳперен асап антарнă. 14. Чăн калатăп: санăн Турру пĕтĕмпех илтет, пĕтĕмпех курать. Вăл пурне те явап тыттарĕ. 15. Çӳлти Турă этеме тĕрĕслес тесе Хăй ырăлăхне кăтартать, ăна пулăшса пырать. Этем çакна курсан: «Турă мана хисеп тăвать!» – тет. Этем хăй ырлăх

курса пуръннипе савънмаллипех савънать те улталанать, кулленхи пурнăç ытамне ыткăнать, Турра тав тума пĕлмесĕр хăйне мăнна хурса пурăнать. 16. Çӳлти Турă этеме тĕрĕслес тесе ăна чухăнлăх тата инкек курмалла тăвать. Этем çакна курса: «Турă мана кӳрентерет. Турă мана намăслантарас тет!» – тесе калать. 17. Çук! Этем! Эсĕ нимĕн те ăнланмастăн! Ĕçӳ ăннă чухне те, ĕçӳ ăнман чухне те Турра тав тума пĕлмелле, чăтăмлă пулмалла. Эсĕ тăлăха хисеплеместĕн, ăна пулăшма май килнĕ чухне те пулăшмастăн. Анчах та çав вăхăтрах ыррине çеç кĕтсе пурăнатăн. 18. Эсир пĕр-пĕрне нуша куракана пулăшма, ăна апат-çимĕç пама чĕнсе каламастăр. 19. Эсир эткере юлнă пурлăхпа укçа-тенке никама памасăр, никама пулăшмасăр тĕпĕ-йĕрĕпе тăкакласа пĕтеретĕр. Эсир çут тĕнчере хăвăр çеç ырă курса пурăнас тетĕр. 20. Эсир укçа-тенке тата ытти пурлăха никамран ытла юрататăр. Укçа-тенкĕ пухасси сирĕн пурнăçăн тĕллевĕ пулса тăнă. 21-26. Мĕн çинчен шутласа пурăнатăр? Çĕр арканĕ те тусан пулса юлĕ. Аслă Турă хушни пурнăçланĕ, пирĕштисем ретĕн-ретĕн тăрса килĕç. Çав кун тамăка сирĕн ума илсе килĕç, тамăк асапĕ сирĕн умра пулĕ. Çав кун çитсен этем хăй мĕн тунине пĕтĕмпех аса илĕ. Анчах та çакă ăна пĕр усă та кӳмĕ. Мĕншĕн тесен вăл хăй тунă пĕр йăнăша та тӳрлетеймĕ. «Манăн ĕмĕрхи пурнăçа хатĕрленмелле пулнă!» – тесе ӳкĕнĕ вăл. Çав кун пĕр Турă çеç пурне те явап тыттарĕ. Çав кун çитсен усал туса çылăха кĕрсе пурăннă çынна пирĕштисем никам хушнипе те мар, Турă хушнипе сăнчăрласа илĕç.

27-30. «Канăçлăх тупнă чун! Турă ырăлăхĕпе кăмăллă пул! Турă патне таврăн! Турă та санпа кăмăллă юлнă!» Таса пурнăçпа пурăннă чун çут тĕнчерен уйрăлса кайнă чухне çак сăмаха илтĕ. Явап кунĕ çитсен ăна: «Манăн таса чунлă та ырă кăмăллă чурасен йышне кĕр! Çăтмаха кĕр!» – тейĕç.

## 90. «Хула» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕрелле çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Мекка хулине асăнса тупа туса калатăп! 2. Мухаммад! Турă сана çак хулара чăн тĕн йăли-йĕркине тытса пурăнма, çак хулара пурăнакансем хушшинче ислам тĕнне сарма ирĕк парать.

3. Этемĕн мăн аслашшĕне тата унăн йăхне тăсакансене асăнса тупа туса калатăп! 4. Турă пултарнипе çын хăйĕн пурнăçне тĕрлĕ ĕçсем туса пурăнса ирттерет, пурнăçĕнче тĕрлĕ йывăрлăх тĕл пулать. 5. Этем хăйне пуринпе те пĕртен-пĕр хуçа тесе шутлать-ши? Вăл çынпа хуçа пулса тăракан Турă çук тет-ши? 6. Усал туса çылăха кĕме вăтанман çын çапла каласа мухтанать: «Эпĕ халăхра чăн тĕне саракан арçынна, халăха Турă Сăмахне пĕлтерекен арçынна усал тăвас тесе темĕн чухлĕ укçа-тенкĕ, темĕн чухлĕ пуянлăх тăкакларăм!» 7. Çак çын хăй мĕн тунине, мĕн каланине никам та курмасть те, илтмест те тет-ши? Вăл хăй тăвакан усал ĕçсене никам та шутласа пымасть тет-ши? 8. Турă этеме куç парса куçлă туман-и? 9. Турă этеме чĕлхе парса чĕлхеллĕ туман-и? Турă этеме çăвар парса çăварлă туман-и? 10. Турă этеме икĕ çул кăтартман-и? Пĕр çулĕ ырă та тĕрĕс çул. Тепĕр çулĕ çынна усал патне илсе çитерет.

11. Мĕншĕн-ха суя тĕнпе пурăнакан çын халăха Турă Сăмахне пĕлтерекен арçынна усал тăвас вырăнне хăйĕн пурлăхне урăх çĕре ямасть? Мĕншĕн-ха вăл ырăлăх патне туртăнмасть? Мĕншĕн-ха вăл хăйĕн пурлăхне пурнăçри йывăрлăхсене татса парас ĕçе е чăрмава парăнтарас çĕре ямасть? 12. Санăн çав чăрмавран иртме мĕн кирлине ăçтан пĕлес-ха ĕнтĕ? 13. Çак чăрмавран иртес тесен тарçă пулса пурăнакан çынна ирĕке ямалла е 14. Нуша куракана, 15. Тăлăх юлнă тăвана, 16. Чухăна е пурлăхне, кил-çуртне çухатнă çынна апат-çимĕç парса пулăшмалла.

17. Çак чăрмавран иртес тесен этемĕн çавăн пекех тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррине ĕненмелле, таса пурнăçпа пурăнмалла, чăн тĕне çирĕп тытса пымалла. Унăн ытти-сене те чăтăмлă та ырă чĕреллĕ пулма чĕнсе каламалла. 18. Çак йĕркене тытса пыракан çын явап кунĕ çитсен сылтăм енче тăрĕ, тамăк асапĕнчен çăлăнса юлĕ. 19. Турă Сăмахне йышăнман çын явап кунĕ çитсен сулахай енче пулĕ. 20. Тамăк вучĕ ăна пур енчен те хупăрласа илĕ.

## 91. «Хĕвел» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чун-чĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Хĕвеле тата хĕвел çутине асăнса тупа туса шантаратăп! 2. Тӳпере хĕвел хыççăн шăвакан уйăха асăнса тупа туса шантаратăп! 3. Çут тĕнчене çутатса тăракан куна асăнса тупа туса шантаратăп! 4. Çут тĕнчене карса илекен каçа асăнса тупа туса шантаратăп! 5. Тӳпене тата тӳпене пултарса хăпартнă Турра асăнса тупа туса шантаратăп! 6. Çĕре тата çĕре пултарса сарнă Турра асăнса тупа туса шантаратăп! 7. Этем чунне тата этем чунне пултарса йĕркеленĕ Турра асăнса тупа туса шантаратăп! 8. Этем чунне шăпа пилленĕ Турра асăнса тупа туса шантаратăп! 9. Чунĕпе тасалнă çын телейлĕ. 10. Чунĕнче усал упракан çын çука юлнă. 11. Самуд халăхĕ Турă Сăмахĕпе килнĕ çынна итлемен, вăл каланине йышăнман. 12. Çак халăхри пĕр мĕскĕн çын тĕвене вĕлерме тăрсан 13. Çӳлти Турă Сăмахĕпе килнĕ Салих: «Турă панă тĕвене ан тытăр, ăна ан вĕлерĕр, ăна шыв ĕçме ан чарăр, ан хăвалăр!» – тенĕ. 14. Анчах та ултав çулĕ çине тăнă халăх Салих каланине итле-мен, чĕрĕ чуна вĕлерес тесе тĕвен шăнăрĕсене татнă. Турă Сăмахне ĕненменшĕн, Турă панă асама курманшăн, тӳрĕ çул çине тăма килĕшменшĕн çак халăхăн шăпи çав тери хăрушă пулнă. Усал туса çылăха кĕнĕшĕн самуд халăхне

Турă тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтернĕ, чыссăр халăхри пĕр çын та çăлăнайман. 15. Вĕсен шăпи, вĕсемпе мĕн пулса иртни Турра пĕрре те пăшăрхантарман.

## 92. «Каç» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чун-чĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Çут тĕнчене, çут тĕнчери мĕн пур чуна, мĕн пур япалана тĕттĕмпе хупăрлакан каçа асăнса тупа туса шантаратăп! 2. Çут тĕнчене, çут тĕнчери мĕн пур чуна, мĕн пур япалана çутатса тăракан куна асăнса тупа туса шантаратăп! 3. Арçынпа хĕрарăма пултарнă Турра асăнса тупа туса шантаратăп! 4. Эсир тунă пĕр ĕç те, эсир каланă пĕр сăмах та манăçмасть. Пуриншĕн те явап тытма тивĕ. Ырă ĕç ырă патне илсе çитерет, çылăх – асап патне. 5. Пурлăхне Турă ячĕпе тăкаклакан, таса чун-чĕреллĕ, çынсемпе яланах ырă кăмăллă пулакан, 6. Тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррине ĕненсе Унăн Сăмахне йышăнакан ывăл-хĕр телейлĕ. 7. Мĕншĕн тесен Эпир вĕсене пулăшса пыратпăр, çăтмаха илсе çитерекен ĕçсене вĕсемшĕн çăмăллататпăр. 8. Пуянлăхĕпе савăнса пурăнакан, пуянлăхшăн хыпса çунакан, Турă панă ырлăха хаклама пĕлмен, 9. Тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррине ĕненмен, Унăн Сăмахне йышăнман ывăл-хĕр телейсĕр. 10. Эпир вĕсене пулăшас çук. Тамăка илсе çитерекен усал ĕçсене вĕсемшĕн çăмăллатăпăр. 11. Тамăка кĕрсен вĕсене пуянлăхĕ те, чапĕ те, ят-сумĕ те пулăшас çук. Хăрушă шăпа кĕтет вĕсене! 12. Чăн калатăп: тӳрĕ çул кăтартасси – Пирĕн тивĕç. Эпир Адам ывăлне-хĕрне Хамăр Сăмаха пĕлтеретпĕр, тӳрĕ çул çине тăма чĕнсе калатпăр. 13. Чăн калатăп: пуласлăх та, иртни те Пирĕн алăра; Эпир çак тĕнчепе те, леш тĕнчепе те пĕртен-пĕр хуçа пулса тăратпăр. 14. Адам ывăлĕсем! Эпĕ сире Хамăн

Сăмаха пĕлтернĕ, тамăк вучĕ пирки асăрхаттарса каланă. 15. Тамăк вутне чи телейсĕр çын кĕрĕ. 16. Çав мĕскĕн чун тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррине ĕненмен, Çӳлти Турă Сăмахне йышăнман, Турă Сăмахĕпе килнĕ çынна итлемен. Вăл чăнлăхран пăрăнса утнă. 17. Ырă кăмăллă, таса чунчĕреллĕ, хăйĕн сăмахне çирĕп тытакан çын тамăк вутĕнчен çăлăнса юлĕ. 18. Вăл Турă пилленĕ тĕне çирĕп тытса пырать, çылăхĕсенчен тасалас тесе пурлăхне тăкаклать, çынсене пулăшать. 19. Çав самантрах вăл çынсем ăна ырăпа тавăрасса, тăкакĕсене саплаштарасса кĕтмест. 20. Мĕншĕн тесен вăл ырă ятшăн хыпса çунмасть, вăл мĕн пур ырă ĕçне Турă ячĕпе пурнăçлать. 21. Чăн калатăп: çак мухтава тивĕç чун Турă панипе кăмăллă пулĕ, леш тĕнчери пурнăç ăна савăнтарĕ.

## 93. «Ирхи вăхăт» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Янкăр çутă ире асăнса тупа туса шантаратăп! 2. Каçа тата каç тĕттĕмне асăнса тупа туса шантаратăп! 3. Турă сана пăрахман, сана пĕччен хăварман, Вăл сана тарăхман. 4. Мухаммад! Çĕр çинчи пурнăç мар, леш тĕнчери пурнăç саншăн лайăх та телейлĕ пулĕ. 5. Кĕçех Турă сана Хăйĕн ырăлăхне курмалла тăвĕ. Эсĕ Турă панипе кăмăллă пулăн. 6. Эсĕ тăлăх ача пулнă. Анчах та Çӳлти Турă сана пăрахман. Унăн хăвачĕпе сана пăхса пурăнакан, сана хӳтĕлекен çынсем тупăннă, вĕсем сана усрава илнĕ. 7. Эсĕ чăнлăх шыранă, тӳрĕ çулпа утма ĕмĕтленнĕ. Çӳлти Турă сана пăрахман. Вăл сана Хăйĕн Сăмахне пĕлтернĕ, сана тӳрĕ çул çине тăратнă. 8. Эсĕ нуша курнă, канăçсăр пурнăçпа пурăннă. Çӳлти Турă сана пăрахман. Вăл пилленипе эсĕ канлĕх тупнă, пуянланнă. 9. Çӳлти Турă панă

ырлăха хаклама пĕл, Çӳлти Турра тав тума пĕл. Çавăнпа та тăлăх ачана ан кӳрентер, 10. Нуша куракана, ыйткалакана хăваласа ан яр, май килсен пулăшма тăрăш. 11. Турă панă ырлăха пытарса ан усра. Турă панă ырлăх çинчен çынсене каласа пар, Турă ырăлăхĕ çинчен пĕлтĕр.

## 94. «Сан кăкăрна уçмарăмăр-и?» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Эпир санăн кăкăрна чăн тĕне йышăнма уçмарăмăр-и? 2-3. Эпир сана çан-çурăмна канăçсăрлантаракан йывăр çĕклемрен хăтармарăмăр-и? 4. Эпир сана хисепе кăларса санăн ятна мухтаса асăнмалла тумарăмăр-и? 5. Чăн калатăп: йывăрлăх иртет те, çăмăллăх çитет. Йывăр самант вăраха тăсăлас çук. 6. Çапла, йывăрлăх иртет те, çăмăллăх çитет. Йывăр самант вăраха тăсăлас çук. 7. Çавăнпа та кулленхи ĕç-пуçран пушансан тĕнчесен пĕртен-пĕр Туррине мухтаса кĕлĕ вула, 8. Çӳлти Турă патне ăнтăл.

## 95. «Смоква йывăçĕ» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Смоква йывăçне тата çу йывăçне асăнса тупа туса калатăп! 2. Синай тăвне асăнса тупа туса калатăп! 3. Мекка хулине асăнса тупа туса калатăп! 4. Турă этеме илемлĕрен те илемлĕ сăнлă туса пултарнă. 5. Турă пултарнипе этем вăхăт иртнĕ çемĕн ватăлать те вăй-халсăр тăрса юлать. Çылăха кĕрсе пурăннă çын çут тĕнчере чи хăрушă

та намăс вырăнта пулĕ. 6. Турра ĕненсе ырă ĕçсем тунă, таса пурнăçпа пурăннă çын çак асапран çăлăнса юлĕ. Ăна иксĕлми телей тата çăтмах пахчи кĕтет.

7. Мĕншĕн эсĕ çак Сăмаха илтсен те Турă хушнипе килекен явап кунне ĕненместĕн? Мĕншĕн эсĕ ăна чăнлăх тесе йышăнмастăн? 8. Турă мĕн пур ыйту çине тĕп-тĕрĕс хурав парать мар-и?

## 96. «Лăймака» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чун-чĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Вĕрентсе кала! Çут тĕнчери мĕн пур чуна пултарнă Турă ячĕпе вĕрентсе кала! 2. Çӳлти Турă этеме юн лăймакинчен пултарнă. 3. Вĕрентсе кала! Турă Хăйĕн чурисемшĕн нимĕн те хĕрхенмест. 4. Вăл этеме çыру хатĕрĕпе усă курма тата çырма вĕрентнĕ. 5. Турă хăвачĕпе этем хăй халиччен пĕлменнине пĕлекен пулнă. 6. Анчах та Адам ывăлĕ-хĕрĕ Турă панă ырлăха хаклама пĕлмест. Этем Турă пилленĕ тĕнрен пăрăнать, Турă Сăмахĕнчен иртет, 7. Мĕншĕн тесен вăл Турра хисеплемест тата Турăсăр, Турă пулăшăвĕсĕр пурăнма май килет тет. Вăл Турра манса хăйне кăна шанса пурăнать. 8. Чăн калатăп: Адам ывăлĕ! Çĕр çинчи пурнăçран уйрăлса кайсан эсĕ Турă патне таврăнатăн.

9-10. Турă Сăмахне пĕлтерекен элчĕне кĕлĕ вулама чаракан чыссăр çынна курнă-и эсĕ? 11-12. Абу Джахль ятлă çын тĕрĕс çулпа утмасть, вăл суя тĕнпе пурăнать. Вăл чыссăр çын, вăл ырра вĕрентмест, никама та ырă кăмăллă та таса чун-чĕреллĕ пулма чĕнсе каламасть. Анчах та тӳрĕ çул çине тăрса таса пурнăçпа пурăнни уншăн лайăхрах пулмĕччĕ-ши? 13. Абу Джахль Турă Сăмахне ĕненмест, вăл Коран йĕркисене йышăнмасть, вăл чăн тĕнрен пăрăнать.

14. Анчах та вăл Турă унăн мĕн пур ĕçне, мĕн пур шухăш-ĕмĕтне курнине пĕлмен-и? 15. Вăл пĕтĕмпех пĕлнĕ! Турра ĕненекенсенчен кулма, вĕсене хĕсĕрлеме чарăнмасан çак этеме хăрушă шăпа кĕтет! Эпир ăна пуç тӳпинчи çӳçĕнчен ярса тытăпăр та тамăка сĕтĕрсе кĕрĕпĕр. 16. Суя сăмах калакан этеме, усал туса çылăха кĕрекен этеме, Турра ĕненекенсенчен кулакан этеме Эпир çӳçĕнчен ярса тытăпăр. 17. Хăйĕнпе пĕр шухăшлă çынсене пухтăр та вĕсенчен пулăшу ыйттăр! 18. Эпир тамăк хуралçисене пухăпăр. 19. Çак чыссăр этеме ан итле, ăна ан пăхăн. Турă патне çул хыв! Чăн тĕне çирĕп тытса пурăн! Турра пуççапса пурăн! Тӳрĕ çулпа ут!

## 97. «Хăват» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Чăн калатăп: Турă Хăйĕн Сăмахне аялти тӳпене хăват каçĕнче антарнă. 2. Хăват каçĕ еплерех пулнине санăн ăçтан пĕлес-ха ĕнтĕ? 3. Çав каç пин уйăхран та ырă, пин уйăхран та паха. 4. Çав каç пирĕштисем тата Гавриил пирĕшти Турă хушнине пурнăçлама çут тĕнчене анаççĕ. 5. Çав каç мĕн шурăмпуç çуталса киличченех çут тĕнчере канăçлăх тата лăпкăлăх хуçаланать.

## 98. «Ĕнентерсе калани» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Суя тĕнпе пурăнакан çын Турă Сăмахне илтсен те, чăн Сăмаха пĕлсен те хăйĕн суя тĕнне пăрахăçлас темен. 2. Суя тĕнпе пурăнакан çын Турă элчийĕ таса Сăмаха сасăпа вуланине илтсен те хăйĕн суя тĕнне пăрахăçлас темен.

3. Коран этеме тӳрӗ ҫул кӑтартать, тӗрӗс пурӑнма вӗрентет.

4. Турӑ шантарни пурнӑҫлансан кӗнеке халӑхӗ шухӑша кайнӑ. Пӗр пайӗ Турӑ элчине йышӑнас тенӗ. Тепӗр пайӗ мӑнкӑмӑлланнӑ та тӳрӗ ҫул ҫине тӑрас темен, Турӑ Сӑмахне пӗлтерекен ҫынна итлемен.

5. Турӑ мӗн пур этеме тӗнчесен пӗртен-пӗр Туррине кӑна ӗненме, Турра мухтав сӑмахӗпе асӑнма, Турӑран каҫару ыйтса кӗлӗ вулама, тӗнчесен пӗртен-пӗр Туррине ҫеҫ пуҫҫапса пурӑнма, чухӑн тӳпине тӳлеме хушнӑ. Ҫак тӗн – чӑн тӗн. Ҫак ӗненӳ – чӑн таса ӗненӳ. 6. Чӑн калатӑп: чӑн тӗне йышӑнма килӗшмен ҫын та, кӗнеке халӑхӗнчи тӳрӗ ҫул ҫине тӑрас темен ҫын та, нумайтурӑлӑх тӗнне тытса пыракан ҫын та тамӑкра пулӗҫ. Вӗсем унта ӗмӗр-ӗмӗрӗпе ҫунса асапланӗҫ. 7. Чӑн калатӑп: Турра чӑн таса ӗненӳпе ӗненекен ҫын, хӑйне усалран упракан ҫын, ырӑ ӗҫ тӑвакан ҫын – Турӑ пултарнӑ чи паха та хисеплӗ чун. 8. Ҫӳлти Турӑ ҫак этеме хаклӑран та хаклӑ парне парӗ. Ҫак ҫын таса ҫӑлкуҫлӑ ҫӑтмах пахчине кӗме тивӗҫ пулӗ. Вӑл ҫӑтмахра ӗмӗр-ӗмӗрӗпе киленсе пурӑнӗ. Турӑ ҫак ҫынпа кӑмӑллӑ пулӗ. Ҫак ҫын та Турӑпа кӑмӑллӑ пулӗ. Турӑ умӗнче ҫылӑха кӗме хӑракан ҫынна телейлӗрен те телейлӗ шӑпа кӗтет!

## 99. «Ҫӗр чӗтренни» ятлӑ сыпӑк

Хӑйӗн ырӑлӑхне мӗн пур чуна паракан, таса чунчӗреллӗ ҫынна ӗмӗрхи асапран ҫӑлакан Турӑ ячӗпе!

1. Ҫӗр чӗтренсе 2. Хӑйӗн ӑшӗнче упраннӑ мӗн пур ылтӑн-кӗмӗле, мӗн пур мул-пуянлӑха ҫиеле кӑларӗ. 3. Чыссӑр та ҫылӑхлӑ ҫын ҫакна курсан: «Мӗн пулса иртет? Мӗншӗн ҫӗр хӑйӗн ӑшӗнче упраннӑ мӗн пур ылтӑн-кӗмӗле ҫиеле кӑларать?» – тесе ыйтӗ. 4. Ҫав кун ҫӗр чӗлхесӗр пулмӗ. Вӑл мӗн пулса иртни ҫинчен, ылтӑн-

кĕмĕле мĕншĕн хăйĕн ăшĕнчен кăларни çинчен калаcа парĕ, 5. Мĕншĕн тесен çапла тума ăна Турă хушнă. 6. Çав кун çут тĕнчерен уйрăлса кайнă çынсем вилтăпри айĕнчен чĕрĕлсе тухĕç те ĕçĕсемпе шухăшĕсемшĕн явап тытма тĕрлĕ ене саланĕç. 7. Ырă ĕçсен виçи тусан пĕрчи чухлĕ çеç пулсан та, этем çакăншăн явап тытĕ, хăй мĕн тивĕçнине курĕ. 8. Усал ĕçсен виçи тусан пĕрчи чухлĕ çеç пулсан та, этем çакăншăн явап тытĕ, хăй мĕн тивĕçнине курĕ.

## 100. «Чупакан ăйăрсем» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1-3. Васкаса чупакан, пашкаса сывлакан, таканĕсемпе чула тапса хĕлхем кăларакан, ирпе ирех тапăнса килекен ăйăрсене асăнса тупа туса шантаратăп! 4-5. Вĕсем тусан хăпартса чупаççĕ те нимрен хăрамасăр тăшман çарĕ çине ыткăнаççĕ. 6. Чăн калатăп: этем Турра тав тума пĕлмест. 7. Çакна этем хăй те курать, хăй те ăнланать. 8. Анчах та этем çакăнпа пĕрлех пурнăçра лайăххине çеç кĕтет, хурлăх курмасăр пурăнма ĕмĕтленет. Вăл ырă курса пурăнма юратать. 9. Çын явап кунĕ çитсен мĕн пулса иртессине пĕлет-и? Вăл вилтăпри айĕнче выртакансем чĕрĕлсе тухнă кун мĕн пулса иртессине пĕлет-и? 10. Чун тĕпĕнчи шухăш-ĕмĕт çиеле тухсан пĕр пĕлмен вăрттăнлăх та юлмĕ, этемĕн пĕтĕм шухăш-ĕмĕчĕ, этем тунă мĕн пур ĕç куç умĕнче пулĕ. 11. Чăн калатăп: чăн Хуçа çав кун этем хăйĕн пурнăçĕнче тунă мĕн пур ĕçе, этем хăйĕн пурнăçĕнче каланă мĕн пур сăмаха пĕлсе тăрĕ, этеме явап тыттарĕ.

## 101. «Хăрушă инкек» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Хăрушă инкек! Çав тери «хăрушă инкек»! 2. Мĕн вăл? Мĕне пĕлтерет хăрушă инкек тени? 3. Çав кун çут тĕнчере пурăнакансемпе мĕн пулса иртессине, çав кун Адам ывăлĕ-хĕрĕ мĕн курассине пĕлместĕн эсĕ. 4. Хăрушă инкек Турă вилнисене чун кĕртнĕ кун çитĕ. Çав кун çынсем йĕри-тавра мĕн пулса иртнине пĕлмесĕр чĕререн хăранипе шăрчăк евĕр тĕлли-паллисĕр унталла та кунталла чупкалĕç. 5. Ун чухне сăртсем-тусем тусан пулса вĕçсе саланĕç те, çĕр чăмăрĕ тураса якатнă çăм евĕр пулĕ. 6. Явап кунĕ çитсен этеме вăл хăйĕн пурнăçне мĕнле пурăнса ирттерни çинчен пĕлтерĕç, вăл тунă ырă ĕçсен виçине палăртĕç. Ырă ĕçĕсен калăпăшĕ çылăхĕсенчен иртсен этем телейлĕ пулĕ. 7. Вăл леш тĕнчере çăтмахра киленĕ. 8. Ырă ĕçĕсен калăпăшĕ усал ĕçĕсенчен сахалрах пулсан çын телейсĕр пулĕ. 9. Уншăн тамăк тĕпĕ тăван амăшĕ евĕр пулĕ, ăна тамăк вучĕ хупăрласа илĕ. 10. Тамăк тĕпĕнче ăна мĕн кĕтнине пĕлместĕн. 11. Тамăк тĕпĕнче ăна çав тери вăйлă çунакан, хăрушă асап кӳрекен çулăм кĕтет!

## 102. «Хапсăнакан» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Пурне те хапсăнса пурăнни сире Турра пăхăнма чарса тăрать. 2. Çак йăлана вилĕм кăна чарĕ. 3. Çак йăларан упранăр! Турă çинчен манса пурне те хапсăнса пурăнни мĕн патне илсе çитернине явап кунĕ çитсен пĕлетĕр. 4. Упранăр! Турă çинчен манса пурне те хапсăнса пурăнни мĕн патне илсе çитернине явап кунĕ çитсен

пĕлетĕр. 5. Явап кунĕ çитсен хăвăра мĕн кĕтнине пĕлнĕ пулсан эсир çут тĕнчери пурнăçшăн мар, леш тĕнчери пурнăçшăн тăрăшнă пулăттăр. 6. Эсир пурте тамăк курăр. 7. Тамăк пуррине эсир хăвăр куçпа хăвăр курăр. 8. Явап кунĕ çитсен сирĕн Турă панă кашни ырлăхшăн явап тытмалла пулĕ.

## 103. «Вăхăт» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Вăхăта асăнса тупа тăватăп! 2. Чăн калатăп: тасамар пурнăçпа пурăнакан этем çут тĕнчере те, леш тĕнчере те çука тăрса юлĕ. 3. Турра ĕненекенсем, ырă та таса ĕçсем тăвакансем, пĕр-пĕрне ыррине кăна калакансем, пĕрпĕрне чăтăмлă пулма чĕнсе калакансем кăна çăлăнса юлĕç.

## 104. «Сивлекен» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Этеме куçран пăхса суя сăмах каласа сивлекене те, çын çинчен суя е ырă мар сăмах сарса çӳрекене те инкек кĕтет. 2. Вăл укçа-тенкĕпе пурлăх пухнă та пуянлăхне шанса пурăнать. 3. Вăл пуянлăхне шанса ĕмĕр пурăнма ĕмĕтленет. 4. Çук! Шанни кăлăхах. Вăл аркатакан тамăка лекĕ. 5. Мĕн вăл «аркатакан тамăк» тени? 6. Аркатакан тамăк вăл – Турă чĕртнĕ çулăм. 7. Çав çулăм чĕре патне çунтарса кĕрет. 8. Чăн калатăп: этеме куçран пăхса суя сăмах каласа сивлекене, çын çинчен суя е ырă мар сăмах сарса çӳрекене çулăм хупăрласа илĕ. 9. Çав çулăм çӳллĕ те çирĕп юпасем çинче тытăнса тăрĕ.

## 105. «Слон» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Турă çырнипе слон хуçипе мĕн пулса иртни сире шухăша яман-и? 2. Турă тăшман çарĕн тĕллевĕпе шухăшĕмĕтне аркатман-и? 3. Турă хушнипе кайăксем çар çине ушкăнăн-ушкăнăн тапăннă. 4. Турă хушнипе кайăксем çар çине тăмран хĕртсе тунă муклашкасем пăрахнă. 5. Турă çырнипе çар тырăсăр улăм евĕр тăрса юлнă.

## 106. «Курайш йăхĕ» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Курайш йăхĕ çирĕп те туслă пулнинчен тĕлĕнсе тăрăр. 2. Вĕсем хĕлле тата çулла суту-илӳ тума инçе çула тухсан та çирĕп те туслă пулнинчен тĕлĕнсе тăрăр. 3. Вĕсем çак çурт Туррине (кааба Туррине) пăхăнса та пуççапса пурăнччăр. 4. Турă вĕсене выçлăхран çăлса апатçимĕç панă, хăрушлăхран упраса канăçлăх панă.

## 107. «Ырă кăмăл» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Çĕр çинчи пурнăçшăн явап тыттарассине суя тесе шутлакан çынна курнă-и эсĕ? 2. Вăл тăлăха пурлăхне тавăрса парас мар тесе хăвалаcа ярать, 3. Вăл чухăнсене апат парса пулăшмасть, ыттисене те чухăнсене пулăшма хистесе каламасть. 4. Кĕлĕ йĕркине тĕрĕс тытса пыман

çынна 5. Явап кунĕ çитсен асап кĕтет. 6. Халăх умĕнче ырă ятлă пулас тесе çеç ырă ĕçсем тунă çынна явап кунĕ çитсен асап кĕтет, 7. Мĕншĕн тесен вăл нуша куракана нихăçан та хăй ирĕкĕпе пулăшмасть.

## 108. «Аль-Каусар юханшывĕ» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Чăн калатăп, Эпир сана çăтмахра аль-Каусар ятлă юханшыв парнелерĕмĕр. 2. Çавăнпа та Турра тав туса кĕлĕ вула, Турă ятне асăнса выльăх пус. 3. Сана кураймансын çут тĕнчере те, леш тĕнчере те ырă курас çук.

## 109. «Ĕненӳсĕр халăх» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Çапла кала: «Ĕненӳсĕр халăх! 2. Эпĕ эсир пуççапса пурăнакан турăшсене пуççапса пурăнас çук. 3. Эсир те эпĕ пуççапса пурăнакан Турра пуççапмастăр. 4. Эпĕ нихăçан та эсир пăхăнакан турăшсене пăхăнас çук. 5. Эсир те эпĕ пăхăнакан Турра пăхăнмастăр. 6. Сирĕн хăвăр тытса пыракан йăла-йĕркепе тĕн пур, манăн хам тытса пыракан тĕн пур».

## 110. «Пулăшу» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Турă пулăшăвĕ çитсен, çĕнтерӳ çитсен 2. Çынсем чăн тĕне ушкăнăн-ушкăнăн йышăннине курăн, çынсем ушкăнăн-ушкăнăн Турра пăхăннине курăн. 3. Çавăнпа та Турра мухтав сăмахĕпе асăн, Унран каçару ыйт. Чăн калатăп, вăл каçарать.

## 111. «Пальма сӳсĕ» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Абу Ляхаб ятлă çын алăсăр тăрса юлтăр та, хăй те тĕп пултăр! 2. Явап кунĕ çитсен ăна пурнăç тăршшĕпе пухнă мулĕ те, тасамар ĕçĕсем те пулăшаймĕç. 3. Вăл ĕмĕрĕпе тамăк вутĕнче çунĕ. 4. Унăн арăмĕ тамăк кăвайтне вут пăрахса тăрĕ те мăшăрĕпе пĕрле асап курĕ. 5. Хĕрарăм мăйĕнчен пальма сӳсĕнчен явнă вĕрен çакăнса тăрĕ.

## 112. «Чăн Турă тĕнĕ» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Çапла кала: «Чăн Турă – пĕртен-пĕр Турă. 2. Чăн Турă – Хăйĕнпе Хăй çителĕклĕ Турă. 3. Вăл никама та çуратман, Вăл никамран та çуралман. 4. Турăпа танни никам та çук».

## 113. «Шурăмпуç» ятлă сыпăк

Хăйĕн ырăлăхне мĕн пур чуна паракан, таса чунчĕреллĕ çынна ĕмĕрхи асапран çăлакан Турă ячĕпе!

1. Ҫапла кала: «Шурӑмпуҫ Турринчен хӳтлӗхпе пулӑшу ыйтатӑп. 2. Хӑв пултарнӑ чунсен усалӗнчен упрасам пире, 3. Сӗм тӗттӗмре тухакан усалран упрасам пире, 4. Ҫип ҫине сурса тухатлакансен усалӗнчен упрасам пире, 5. Ӑмсанакансен усалӗнчен упрасам пире».

## 114. «Ҫынсем» ятлӑ сыпӑк

Хӑйӗн ырӑлӑхне мӗн пур чуна паракан, таса чунчӗреллӗ ҫынна ӗмӗрхи асапран ҫӑлакан Турӑ ячӗпе!

1. Ҫапла кала: «Ҫынсен Турринчен хӳтлӗхпе пулӑшу ыйтатӑп. 2. Ҫынсен чӑн Хуҫипе чӑн Патшинчен хӳтлӗхпе пулӑшу ыйтатӑп. 3. Ҫынсен Турринчен хӳтлӗхпе пулӑшу ыйтатӑп. 4. Ҫылӑха кӗме хистекен, Турӑ ятне илтсен таракан шуйттан усалӗнчен упрасам пире. 5. Этем йӑхӗнчен тата ют йӑхран тухнӑ шуйттан усалӗнчен упрасам пире!»

**Коран**

*смысловой перевод на чувашский язык,*

*тридцатая часть*

Подписано в печать .10.2020. Формат 60×84/16.
Бумага офсетная. Гарнитура Cambria. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 2,25. Тираж 100 экз. Заказ № К-212.

Отпечатано в типографии «Новое Время».
428034 Чувашская Республика,
г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 32-33-53. E-mail: newtime1@mail.ru